тор („Ах тор-тор" мар) ушкăнĕ
ĕтçетаттелĕн, Çтеппанăр йулташăн,
кашни кун курăнакан тĕлĕкĕ.

СОТСИАЛИСĂМ ÇУЛĔН ЛАКĂМĔСЕМ.

(КАЛАВ).

Кивçен паракан йулташлăх Тĕпçырма йалĕнъе, патша вăрçинъенех шăтса тухнă. Ун тухне йулташлăхăн мĕн пур куçмаллипе куçмалла мар пурлăхĕ пĕр укçа арăи (тимĕр çунми арăа) çеç пулнă. Правленире хура пуп пуçлăхра тăнă. Каççирĕ, пухăалтĕрĕ, правлени ъленĕ, ревизçи комиççи—пур ĕçе те пĕр пуп туса тăнă. Ун çумĕнъе тепĕр уъиттĕлпе стăршина правлени ъленĕнъе тăнă.

Çĕнйалти Петрун муъин (ун тух вăл ытла муъи темеллех ватă пулман) çитмен пурнăçĕ муъийе çав йултаплăхпа лайăх паллаштарнă. Пĕр çурхине Петрун муъи аптраса çитнĕ. Мĕн тăвас? Аъи-пăъи вак, çиме çăкри çук, хутма вутти çук, илме çăкри çук... Малтанхи çулсенъе те вăл пуйансенъен тырă илкелесе тарçă пулса курнă. Çын тарçи пулнипех унăн хуралт тăррисем улăмсăр çаралса йулъĕç. Ирхине вара сарайĕнъи каштa çинъен алтанпа ъăххисем тӳрех сарай тăрне вĕçсе тухаъъĕç.

Петрун муъи аптранипе йултаплăхран 15 тенкĕ кивçен илъĕ ултă уйăхлăха. Ълен пулса тăъĕ вăл. 15 тенкĕ укçава тӳлеме унăн кĕркунне 30 пăт ыраш сутмалла пулъĕ.

— Тĕп пултăр, кунашкал йулгашлăх, терĕ Петрун муъи ълен кĕнекине кăмакана пăрахса.

Реводуçси вăхăтĕнъе Тĕпçырма йулгашлăх ъăнах та пĕтрĕ. Ик-виçĕ çултан каллех йулташлăх уралана пуçларĕ. Правленире ĕнтĕ пуп мар, Çăкалăх ушкăнъи Иерми ывăлĕ пуçлăхра.

Çĕнĕ йултаплăх çĕнĕ хурăмпа ĕçлеме шутлаç. Çĕнĕ ълевсем хушăнсах пыраççĕ. Йултаплăх ӳсет. Мĕн кирлĕ тавар, курте Шупашкартан килсе тăраç. Йултаплăхăн пысăк лапка, тырă склаъĕ, тата ытти пурлăх та пур. Ик-виçĕ çул иртрĕ. Йултаплăх мĕн иккенне йалсенъе нумайăшĕ ăнлана пуçларĕç. Петрун муъи каллех 3 пăт ыраш пай укçи хывса ълена кĕъĕ. Ун хыççăн ытти сем те 6—7 çын ълена кĕъĕç. Пур çĕрте те Тĕпçырма йултаплăхне çеç асăнаççĕ.

Правленире тăракан ъленсем Иерми тавраçсем йала тĕлĕнтере пуçларĕç. Пĕр ывăлĕ ъиперех шкул пек симĕс тăрăлла пӳрт лартрĕ. Тепĕр ывăлĕ аслă шкула вĕренме кайса кĕъĕ. Вĕсен хурăнташĕсем хăшĕ—çăм арманĕ, хăшĕ—авăн çапмалли, тырă сăвăрмалли, улăм турамалли машинăсем туйанса пĕтрĕç. Кашнинех вĕсен ъĕнтĕрленĕ пахъалăксем (вырăсла хапхасем) кăвак сăрпа тумлавъĕç.

Петрун муъи те йулгашлăх ъленĕ. Унăн аслă ывăлĕ Хĕрлĕ çарта. Кипте тата пилĕкулт аъа унăн. Пурнăç çав майах çӳхе. Çĕтĕк саплăкла сăхман Петрун çинъен хывăнастăн мар.

Пĕрре пур йулгашлăх ъленĕсем пуххи пулъĕ. Ку пухува Петрун муъи те ула саплăкла пек кĕсрине кĕреслелъĕ çунана кӳлсе Кавĕрле кӳршĕпе вĕçтеръĕ.

Шкул тулли халăх Çĕр çын та ытла, пурте йулташлăх ъленĕсем. Правленин ъленĕсем (Иерми гаврашсем) пуху халăхне мĕн каланине Петрун муъин хăлхи тăплаймарĕ. Пуху пĕтсен пурне те пĕрер кĕренке шушкă валеçни Петрун муъи кăмăлне карĕ.

Кун иртет, çул иртет. Ъăвашсем республикĕ турĕç. Тĕпçырма йултаплăхĕ тата пĕрикĕ хут шушкăлла пухусем туса иртеръĕ. Йулашкинъен тата шушкă çине пĕрер тĕрке пушăт кашни ълена (пухува пынисене) парса йанă. Ъленсем пурте кăмăлла. Йултаплăх усăллă.

Анъах, темĕнтĕн Шупашкартан пырса йултаплăх правленине çĕнĕрен суйларĕç. Кивĕ правленийе пĕтĕмпех кăларса ывăтрĕç. Пĕр-икĕ уйăхран йулгашлăх, ликвидатси хурмине куçрĕ те, пĕтĕмпех пĕтсе ларъĕ, шанъăксăра тухрĕ.

Йерми таврашсем унтăн пиртĕ шавъăкла пурнăçпа пурнаççĕ. Вĕреннĕ ывăлĕсем аслă вырăнсенъе—пысăк шалу çинъе. Хаъ ĕнтĕ Иерми таврашсемпĕн пулсан йултаплăх мар унăн йаъĕ пулмасан та вĕсем куъанма шутлас çук. Çапла пуйтарса хăваръĕç вĕсене тухăн хресъенсем.

Петрун муъи Тĕпçырма йултаплăхне хывнă ълен укçи (3 пăт ыраш) тĕп пулнăшăн куъанмасăр. Хаъ вăл хăйсен йалĕнъи çĕнĕрен уçăлнă пĕрлешсе ĕçлемелли йултаплăхра тăраç. Йултаплăх ъленĕсем хăйсем кашни ĕçне уйрăм асăрхаса, тĕрĕслесе тăраççĕ.

Петрун муъин сарайĕ çине çĕнĕ улăм витĕннĕ. Хăй те вăл çĕнĕ сăхман çĕлетсе тăхăннă. Суха тунă тух вара плук хыççăн çамрăк çын пек шăхăрса утса пыраç... Плук ураписем ъавкăртатса хутăш тăрисен йурри Петрун муъишĕн туна хаваслантаракап çĕнĕ кĕвĕ.

У. Т.

Шъоттовота кайнă.

— Сирĕн йалти Никкифăр Иаккимъа кооперативра ĕçленĕ тух растраттă тунăшăн аçта илсе кайнă ара?

— Шъоттовота.

— Мĕнле кооператива?

— Кирпĕъ шутлатгараканнине.

Ишек.

Кĕнеке сутти.

— Халĕ кооператтивсене кĕнекесемпе те сутă тума хушаççĕ, темеççи? Сирĕн кооператтивра та кĕнекесем нумай пулĕ?
— Нумай.
— Хăш кĕнекине нумайрах ыйтаççĕ илекенсем?
— Шăлăпă кĕнекине.

ЙĔПЛĔ ÇĂМАХ ХЫПАКАНСЕМ.

Çăлăр, çăлăр!

Çăлăр! Пĕтет çын, пĕтет! Шуҫă тыттарăр хăвăртрах! Антăхса кайаҫ! Пĕтет çын, пĕтет! Ăçтан тупăпăрха ун пек сăттовот. Вăрмар районĕнҫи Анаткас-Тушкилсем, илместĕри мĕн? Михал Иекорăва ма çăлмастăр! Ой, ой! Мăк-мак тума пуçларĕ! Тухаймаҫ... Ех, Михал Иекорҫă, аван çынҫăрĕ есĕ—сайавленисем çырса паратăвҫăр. Сайавленисем пиркийех пĕтетĕн ĕнтĕ. Сайавленисем çырман пулсан... ерех ишĕлки ăшне те кĕрсе ӳкместĕвҫĕ! Ей, халăх! çăлăр, çăлăр!.. Пĕтет!

Ҫаплă пленăм ҫаплă саланни.

Пĕри авал ернекун пасарне тунтикун кайнă, тет те, нимĕн йăпала туйăнмасăрах таврăннă, тет. Ишлей-касси йăлсоветăн 25 членĕсем Ҫĕваш автономийĕ 9 çул тултарнă кун, ҫĕвнĕ вăхăтрах, Ишлей-кассине пленăм тума пухăнса тулнă. Каланă кунах пухăннă пулин те, пленăм тăваймасăрах таврăннă. Мĕншĕн апла тумалла пулнине пĕлес пулсассăн, йăлсовет прегсегатĕлĕвҫĕн ан ыйтăр, мĕншĕн тесен автономи кунхине вăл астăваймаҫ. Астăваймасгех çав, мĕншĕн тесен ун ҫухне вăл ӳсĕр пулнă. Пĕрисем каланă тăрăх, прегсегаттĕл вăл кун Ҫĕваш автономийĕ йăҫĕпе ĕçнĕ, иеприсем каланă тăрăх, «виçипиостаçлĕ труйски» йăҫĕпе. Тĕрĕссипе каласан, уншăн та мар, куншăн та мар—«ҫĕлĕмĕ çухатнă» йăҫĕпе.

Ăмăрту.

Хитров йулташ акмĕ çырса пире тĕлĕнтерҫĕ:

Алманҫă (Патăрйел районĕ) пупĕ мыскара тунă. Хăй хĕрĕнкĕ пулнă. Ун хваттерĕнче туй кĕвĕ. Пул калаҫ: çынсем туй тăваççĕ, тавай ешĕр те пĕр интерес туса илер, тет: Çынсем мĕн тăвар? теççĕ. Пуп калаҫ: кам урам тăрăх кĕпе ĕр-йĕмсĕр çарамас ҫупса килсен çиреп çăмарта çимелле, çăмартисене çисе йăрсан, пĕр тенкĕ укçа парăп, тет. Лауçка Петти кĕписене хываҫ те Анаткасса ҫупса килет, çиреп çăмарта çийет, тенкĕ укçа илет, тет.

Мыскара тума йуратаҫ Алманҫă пупĕ. „Капкăна“ кĕрсе ларсассăн мыскарасем калакалаҫ. Ашшĕн, ывăлĕн çеттуй сывлăшĕн йаҫĕпе кăларăр мана «Капкăнран», тет. Кăлармастпăрха. Лартăрха. Ларнăшăн укçа илместпĕр.

Йĕплĕ çăмах йумахĕ.

Тишшĕ! Шавлама ҫăрăнăр! Епĕ сире йумах каласа кăтартам. Ковешнĕ, ман йумахăм суйа мар,—ҫăн пулнă. Тимĕрç-кассн (Вăрнар р.) йалĕнҫе ҫухăн хресҫенсем пиçĕ нумай. Çавсем выçса вилме пуçласа уйăх тăрăх кĕреçе çăнăх илсе çисе пурăннă. Çимĕк çитсен вĕсенҫен хăш-пĕрисем сăра туса ернипех ӳсĕр çӳренĕ.

Сяаҫăт кăсене выçса вилме пуçласан Шупашкартан йĕплĕ çăмахпа тăрантармалла. Йумах йуман тăрне, хам хăва тăрне. Пĕтрĕ.

Т—к.

Çапла пулҫӗ пӗр копператтӑрпа.

Ҫӑлхайӗв инструктӑрпа Лапкков копператтӑр пӳрте кӗҫӗç те, сарлака сӗтел хушшине вырнаçса ларҫӗç.

— Праски,—терӗ маткине копператтӑр. —Пырха, кайса киҫха каçувкка, илсе кил пӗриккӗшне те, ӗçленӗ хыççӑн канар епӗр, —терӗ.

— Ниҫҫево, ун пекех канмасан та пырат пулӗ.—çемсен хирӗçлерӗ инструктӑрӗ. Анҫах хӑй, айккине пӑрӑнса, туга хӗррисене кӑшт çулласа илҫӗ те, çавӑнтах тепӗр сӑмах çине куçрӗ:

— Та а, шеп ӗçлен ес, растраттӑ çук. Пурте сан пек ӗçлесен, сотсиалисӑма çитесси нумай та йулмаст...

— Мӗн пытарасси, пурте пӗлеççӗ, непример остаҫным, лайӑх ӗçлетӗп еп,—тет хирӗç копператтӑрӗ. Унтан ҫышкисене ҫӑмӑртат те, куçӗсене серйоснӑйлатса: А, растратҫӑксене еп тух кураймастӑп, штоп ан пултӑр ун пекки кун пекки! Вӗт, некогнӑй паршшивӑйсем, намӑса пӗлмесӗр çаратаççӗ, поҫҫом срйа халӑх укçине çӑтаççӗ... А, сотсиалисӑм çинҫен и тумӑшки не тумайут! Вӗт, ҫай пӑртак пӗлес пулат, копператтӑрсем вӗт сӑмса йухтарса çӳрекенсем мар, пӗлес пулат хӗвеллӗ, уйӑхлӑ пулас пурнӑç çинҫен! И снат не снат, сволӑҫсем, çав пулас хӗвелпе уйӑх çинҫен...

Ку тӗлте алӑк уçӑлат те, копператтӑр матки, саппун айӗнҫен ик пулӑштух «симӗсси» кӑларса, вӗсене сӗтел çине лартат.

— Тавай стаккансем,—тет копператтӑр, —унта, шкапра тата, лапккаран илсе килнӗ ветҫинапа кӑлпасса пурҫҫӗ,—çавсене пар!

Иӑваш, упӑшки йӑлисене пит лайӑх пӗлекен арӑмӗ, мӗн хушнине пурне те туса парат. Стаккансене килсе лартсан, копператтӑр путылкка пропкине тӗпрен çапса шаплаттарса, тӳпене перет те, стаккансене ерехпе тултарса лартат. Унтан инструктӑр Ҫӑлхайӗвпа Лапкков копператтӑр пӗрпӗрне сывпул туса ӗçеççӗ. Ӗçнӗ хыççӑн саккускӑсем çырткалаççӗ те, тата тепӗр хут стаккансене типпе хӑвараççӗ. Кун хыççӑн пӗр путтылккӑ пӗтет те, теприн те мӗскӗн пропкки тӳпене кайса лексе, кӑмака хыçне персе анат... Сӑмсасем хӗрелеççӗ, куçсем ылмашӑнма тытӑнаççӗ.

— Та, снат не хоттат сотсиалисӑм тумаллине,—тесе каллех ҫышкисене ҫӑмӑртаса, сӗтеле килсе çапат копператтӑр Лапкков.—А исвоҫттӗ спроççит, сашто поролиç, сашто кров проливали шырлан тӑрӑх, по вçем çтепйам и тремуҫҫи вӑрманӑм?.. а? Сашто ман çеретинӑ шивот пуҫӑ çитнӗ, и мана, по враҫҫепнӑй осмотр, маткапа выртма не потопайӗт?

— Хӑм... конешнӑ, тӗрӗс калатӑн,—тет хирӗç инструктӑр Ҫӑлхайӗв.—Сотсиалисӑм тума нумай канçӗрлеççӗ пире растратҫӗксем. Хаҫ пирӗн интустриалисатси...ик-ик...и реконструк...ик-ик-и!.. ӑна пӗлмеççӗ!

— Вот именнӑ пӗлмеççӗ! Вот ман умран пулнӑ копператтӑрсем пурте растраттӑ тунӑ: хӑшӗ копператтив укçипе вите-кӗлет пеккисем туса лартнӑ, ну, как потапайӗт, хӑшӗ тӗрмене укогил, а еп ӑшшӑ, кӗлет мар, йӑтӑ хушши те туман...

Çапла пӗр виç сехет хушши «сотсиалисӑм туса» лараççӗ Ҫӑлхайӗвпа Лапкков. Хӗвел аниҫҫен килнӗскерсем, хӑй çутса та нумай ларҫӗç. Пӗрене хушшисенҫен копператтӑрсене курма пӑхӑр таракансем ҫӑшӑлтатса тухрӗç, копператтӑрсен саккускӑ йулашкине çиме сӗтел çине шӑнасем пуçтарӑнҫӗç. Ҫӑлхайӗв Лапкковран шӑпрах ӗçет. Лапкковӗ ӗçнӗçем хӗрсе пырат. Иулашкинҫен вӑл, пӗр çурмаçӗр çитнӗ тӗлелле, хӗрсе кайса, ура çинех сиксе тӑрат.

— Штоп токкасат претӑннӑçт итей сотсиалисӑма йа коттов полуҫҫат йешҫо отин пуҫӑ, коттов шиç оттат, не шалккӑ! Тавай растратҫиккӑв пит! Мнокӑ пирӗн йалта растратҫӗксем, айта кайатпӑр вӗсене вӗтме! Мçтит им нушнӑ са сотсиалисӑм!

Лапккова матки ҫарма хӑтланат. Анҫах ӑна Лапкковӗ ҫасах тӗртсе йарса, Ҫӑлхайӗва урама сӗтӗрсе тухса кайрӗ.

* * *

Лапкков копператтӑр киле ирхине анҫах килнӗ. Пӗр 5 сехетре килсе, кӑнтӑрлаҫҫен çывӑрсан, вырӑн çинҫен тӑрса.. кулса йарат. Тутисем хӑлха таранах сарӑлса кайаççӗ, куçӗсем çавтери савӑннипе хупӑнсах лараççӗ.

— Ма тӑнӑ-тӑман кулатӑн?—тӗлӗнсе ыйтат матки.—Ухмаха йермен пулӗ вӗт ес?!

— Еп ухмаха йермен, вот çынсем... ҫӑнах та ухмаха йернӗ!—тепӗр хут ахӑлтатса кулса йарат Лапкков.—Ха-ха-ха ухмах инструктӑр, ним кушак çури те пӗлмест! Простой таккойски и колӑй ухмах. Ара ес хӑвах шухӑшлаха, ӑслӑ инструктӑрпа еп çапла хӑтланӑпи?! Еп ҫасах сисрӗм вӑл ухмаххине, пӗр самантрах! Ха-ха-ха... вот инструктӑр! Вӗт пирӗн унта пӗр 500 тенкӗлӗх растраттӑ пур, а вӑл кушак çури те пӗлеймерӗ! Ха-ха ха!..

Çапла нумайҫҫен кулса ларҫӗ Лапкков. Унтан кулса тӑрансан, апат çиме ларҫӗ.

— А, инструктӑрӗ ӑçта вара пайан?—тесе ыйгрӗ арӑмӗ Лапкковран.—Каçах тухса каймарӗ пулӗ вӗт?!

— Калап вӗтха ухмах вӑл тесе! Хӑрани тӑвасси нимӗн те çук ун, каçах тухса кайрӗ. Лав тавраш та ыйгмарӗ вӑл, мӗнле тухса кайнине путлӗн пӗлместӗп те... прикашҫӗк патӗнҫе çывӑрса йулнӑ еп.

АСЛИ.

— Вăл сахăра ăçтан илтĕн?
— Копператтивран.
— Есĕ ђлен марçке?
— Епĕ ђлентан та аслăрах.
— Кам вара ес?
— Прикашђăкăн йыснăшĕ.

— Есĕр вара никама та çĕмĕрмерĕре каç?—çаплах хăйса ыйтаť арăмĕ.

— Мĕн, ухмах штолĕ еп çĕмĕрме?! Пĕр çĕре кĕрсе татах ĕçрĕмĕр епĕр... хуť, вăл ухмах, ĕçмерĕ, еп çеç ĕçрĕм. Ха-ха-ха вот инструктăр,— татах кулса йараť Лапкков.

Анђах ку тĕлте такам килсе çапнă пек алăк килсе уçăлаť те, пўрте копператтив приккашђĕкĕ, вилнĕ çын пек шуралса кайвăскер, кĕрсе тăраť.

— Мĕн пулнă?—кулма ђарăнса, кăшт çўçенсе илет Лапкков.—Мĕнскер амак!?

— Пĕтрĕмĕр,—тет прикашђĕкĕ.

— Ара, мĕн ара, мĕн!?

— Укçа... укçа...

— Мĕнле укçа?—кашăка пăрахса, аран тăракан приккашђĕк патне ђупса кайаť Лапкков.—Кала хăвăртрах.

— Кассăра пĕр пус укçа та çук вĕт, кайса пăхха лапкана,—аран каласа пыраť приккашђĕк.—Веçех леш, хайхи «инструктăр» йакатса кайнă вĕт, 500 тенкипех!

———

Сут пулаcа кĕтсе выртаť хађ Лапкков.

— Ĕх, ухмах, ухмах ес, Лапкков,—тет хађ Лапкков хăйне хăй.—Шуђăка инструктăртан уйрайман тăмана ес!—тет.

Лапкков «ухмах» тенĕ «инструктăр» инструктăр пулман вăл,—таврари паллă шуђăк пулнă. Çапла пулђĕ пирĕн пĕр ăслă копператтăрпа.

В.

Хапăсри карттин.

Сарă питлĕ хĕвел ирхи кӳлĕм ҫăрăшлăх вăрманĕ урлă кармашса ылтăн шăлĕсене йĕрсе Хапăс йалĕ ҫине йăлтăр пăхса илнĕрен вара ҫылайах тӳпенелле хăпарса, кукша пуҫлă ҫынсене пуҫĕнҫен пĕҫертме тапратрĕ. Хĕвелĕ ытла та пĕҫертме пуҫланăран Вăрнар копператтивĕн Хапăс йалĕнҫи уйрăмне тавар илме пынă ҫынсем лапкана ҫиҫҫен ластака йывăҫ кутне тăсăла-тăсăла выртса кукăр мăйлă пăхăр ҫĕлĕмĕсенҫен кăвак тĕтĕмĕсене йавăнтарса халап ҫаптарса выртаҫҫĕ. Кăшт пĕр вăхăт иртсен, лапка патнелле мăйне мăйпăран пек кукăртса лартнăскер ҫитрĕ те, сысна ыраш калҫи ăшне ҫăмнă пек лапкана кĕрсе кайрĕ. Ун хыҫҫăн йапала илме килнĕ ҫынсем пурте пĕр самантрах лапка алăкĕ патне пырса ҫыхăнҫĕҫ. Лапкинҫе те кĕрсе ҫавăрăнса тухмаллăх шăтăк йулман, ҫапса хĕснĕ пекех тулнă.

— Ну, кому ҫово вато?—терĕ прикашҫĕк шăпăр аври пек тăратса тăракан ҫын пуҫĕсем ҫинелле пăхса.

— Мана ҫур кĕренкке сахăр виҫсе парха?

— Ес ҫĕлени?..

— Ҫлин, акă кĕнеки,—терĕ инке кĕнекине кăтартса.

— Латнă апла.

Унҫҫен те пулмарĕ Иефремăв прикашҫĕк пĕр шите йахăн вăрăм ӳссе кайнă хура-марапа хуп-хура хурăхнă ҫĕрнисемпе сахăра тармакласа илҫĕ те, виҫе ывăсисем ҫине хут сармасăр ҫараллах лаплаттарса хуҫĕ.

— Тата ҫей пар?

— Ҫиҫҫас-с!

Нихҫан шăпăр, шыв лекмен урайĕнҫе выртакан пĕр татăк сахăра илсе тыттарҫĕ те, Коломĕнски ҫине пăхса:

— Сана мĕн парасха?—терĕ.

— Мана пĕр кĕренкке кăлпасси турттарса парха?

— Кăлпасси ҫук.

— Мĕнле апла ҫук!..

— Каланă сана ҫук тесе, суйатăпи мĕн сана!

— Акă кунта йешҫĕкре пур вĕтха, ку мĕн? Кăлпасси мари мĕн?

— А, вăл сутмалли мар, вăл такҫантанпах выртаҫ. Курмастăни мĕн пăнтăхса кайнине.

— Хха! Та-а-ак еппин.

Лапка комиҫҫин ҫленĕ Коломĕнски йулташ пĕр аршăна йахăн тусан пусса илнĕ лампă ывăси ҫине ҫылайҫҫен пăхса тăнă хыҫҫăн, 25 пус тăракан супăне 30 пус ҫинҫен илсе ҫынсем хушшинҫен аран-аран хĕсĕнкеле-хĕсĕнкеле тухса килнелле уттарҫĕ.

— Слушай, Иефремăв! Кӳрха мана ҫасрах пеҫҫени парса йарха.

— Халех, акă халех. Мĕн курмастăр-и мĕн!.. Пушă мар вĕтха—тикĕт виҫсе паратăп, терĕ лапка ҫленĕнҫе тăракан Куҫнетсовă йулташа хирĕҫ, йапала илме пынă ҫынсемпе сăмахлă пулнăран вĕриленсе кайнă прикашҫĕк.

— На вот полуҫҫай! Тикĕт парса тикĕтленнĕ аллисене ҫумасăрах пеҫҫени турттарса панă хыҫҫăн, Куҫнетсовă йулташа 14 пус тăракан шпуҫккă ҫиппине 15 пус ҫинҫен тыттарса йарат.

Лапкара ҫын лăпах тулса хăма кĕпер пекех кĕпĕртетсе тăрат, ниăҫта йĕп ҫикме те вырăн тупас ҫук. Лапкана шăнăҫайманнисем тултан лапка алăкĕ йенелле ҫĕрĕп йĕппи пек тăрăнса тăраҫҫĕ, хăшĕ-пĕрисем пушă йешҫĕксем ҫине хăпарса ларса ĕҫсĕр аптăраннă йенне ҫĕлĕмĕсене ҫĕртсе йараҫҫĕ. Сахăр, премĕк, лантрин таврашне хутпа ҫăркаса памантан, картус ҫинҫе йе вараланҫăк саппун ҫине хурса лапккаран тухса пушанакансем, килекенсенҫен сахалтарах.

— Акă ҫакна, акă,—сăрă тутăр, ве-е-еҫ авă ҫи ҫӳлте выртаҫ.

— Ăҫта унта, ҫук вĕт! Сăрă тутăр пирĕн ҫукта вăл.

— Пурҫкеха ве-е-еҫ авă ҫи ҫӳлте, тесе—тăваткăл питлĕ сарă хĕр тусан пусса илнĕ тутăр ҫине имшертерех пӳрнисемпе тĕлесе кăтартса сăмаххине пĕтернĕ ҫĕре, лапкари ҫынсене вăйпа сиркелесе кĕнĕ тутар ҫитсе унăн сăмаххине тытса илҫĕ

— Айта скурей утпусти-и?

— Ан пар ăна ан пар! Вăл халĕ тин ҫеҫ килҫĕ, кунта паҫăртанпах тăракансем пур. Ха, ха! Ма парав! Ма парав! Вăл ҫитменнине ҫлента та тăмасҫ вĕт!—тесе кăшкăрса йаҫĕ пĕр ҫăваш алăк тăпси патĕнҫен, хĕсĕннĕрен ăшне кайнă сассипе.

— Как ни ҫлин! Иа тавно ҫлином состойу, ты сам ни ҫлин—тесе йатлаҫкала-йатлаҫкалах пĕр тăваткăл хăма ҫейне пĕтĕмĕшпех йăтса тухса кайрĕ.

Кукша пуҫсене пĕҫертекен хĕвелĕн ҫути йăвашланнăҫемĕн йăвашланса пырса, сăртсем хыҫне пытанасшăн талпăша пуҫларĕ. Иал ҫине аслă кĕтӳ йарас вăхăт ҫывăхарса ҫитет пулин те, лапкана йапала илме килнĕ ҫынсем сывални палăрмасҫ те.

— Ну, пурте тухăр! Хупатăп.

— Хăҫ мана ҫеҫ...

— Тархасшăн мана пĕр теҫетка спиҫкă парса йарха ĕнтĕ.

— Никому не отпушҫу, сакрывайу. Халĕ те 10 минут лишни сут тунă.

Иал ҫине аслă кĕтӳ йанă вăхăтра пус хапхи айне пырса хĕвĕннĕ пекех, йапала илме пынă ҫынсем алăкран ахлата-ахлата хĕсĕнсе тухнă хыҫҫăн, ҫине пуҫне тӳрлеткелесе, илес йапалана илейментен ĕнсисене лаштăрах йарса, 2—3 ҫухрăма килелле утаҫҫĕ.

В. АВАНСКИ.

„Кĕрешекенĕн“ паттăр „королĕсем“.

Çĕнтернĕ хыççăн паттăрĕсем тупăнаççĕ.

Курнавăш çĕнтерчĕ. Иелчĕк районĕнчи Курнавăш кооперативĕ «Кĕрешекен» (борец) кĕрешӳре паттăра тухрĕ. Ҫăвашсойусăн конкурсĕнче 1-мĕш премие илчĕ. Кооперативĕ вăйлах... Конкурс хыççăн хăй çине çаврăнса пăхать те, 12 йăлтан 1600 çын ҫленга тăрать, 6 оттелени... Премие илме тивĕçлĕ те, савăнмаллах.

Анчах, кооперативăн конкурс хыççăн пĕр инкек сиксе тухрĕ,—кооперативĕ мар, 1600 ҫленĕ мар, ăмăртура—Курнавăша мала сĕтĕрсе тухаканни—е п ĕ.. текен паттăрсем сиксе тухнă. Правленийĕ ларма-тăма пăхаççĕ.

— Куна пĕлнĕ пулсассăн премийу-каҫку таçта сĕтĕрсе çитерĕç. Вăртăн ĕçсем тума тургаççĕ вĕт-хе.. Мĕн тăвас?

Мыскаралла ĕçсем хускалчĕç. Е п ĕ çĕнтертĕм, урăххи мар, тесе кăшкăракан паттăрсем унăн та кунăн выçăнма тытăнчĕç.

Кооперативăн претçетатиĕлĕ Курнавăш паттăрĕ йатне илтсе Шупашкаралла тургăнчĕ. Хăйне Ҫăвашсойусăн мăн склачĕн пуçлăхĕ туна ха, хăйне паттăршăн Ҫăвашсойус 30 метăр мануфактурă пана-ха. Ку çитмен. Ҫава-Çăхан таврашĕн татах хыпас килет. Шупашкартан Курнавăша çакăн пек çыру вĕçрĕ:

Иулташсем!

Пирĕн премийе окончательно утвердит туна. Çак преми илес ĕçре е п ĕ хама «короҫ» пуҫ тесе шутлатăп. Çавăнпа епĕ хамăр правлени ҫленĕсен хушшинче валеçмелли суккаран 50 проҫҫăне (çуррине) мана тивĕçлĕ тесе шутлатăп.

Галкин.

Калккин—партăи кăнгитаҫĕ, суту-илӳ тăваканăн аҫи (ашшĕ виçĕмçул çех сутă тума пăрахнă)—Ашшĕн ĕмĕтсĕрлĕхĕ ыглашшипех те ывăлне йулнă. «Трудовая газета» кун пек кайăксем мĕнле çунат сарса пынине май уйăхĕн 20-мĕшĕнче тухнă № рĕнче лайăхах кăтартрĕ. Ҫăвашсойус çех, конкурс сĕрĕмĕ пуçне тивнипе пулас, ăна-вуна ним не те туймарĕ.

Ку тата-ха, паттăрсем татах та пур. Акă тепĕр петтитси:

Иулташ Никколайĕв!

Епĕ сирĕн кооперативăн çинчен «Канаш» çине çырса 700 тенкĕ ытларах преми илтертĕм. Мана вăл саметкăсемшĕн 15 тенкĕлĕх йапала анчах пачĕç. Çырнă ҫухне Галкин йулташ: пĕрремĕш преми илмелле «Канаш» çине çырса паратăн пулсан, сана пĕр 50 т. парагпăр тесе çыртарчĕ. Хаҫ çав преми шӳрĕ çирĕплетни 83 мĕш № рте тухнă. Çавăнпа... мана йе йапалапа, йе укçан хăвăрăн совăçпе пулăшасси çинчен сӳтсе-явăр.

Шанса тăратăп, ыран пыратăп.

В. Çитăрĕв

16|V-29 ç.

Çитăрăвĕ те маттур,—партăи ҫленĕ, йалкор, испаҫра ĕçлет. Кооперативăн совăçне ăш сăмахпа ҫавса, ĕçхалăх пурлăхне вăл та тӳпелеттересшĕн.

Статйа çырнăшăн Çитăрăва 1) фотоаппарат парнеленĕ, 2) „Канаш“ хаçат 8-мĕш иcтани тӳлевсĕр çулталăк хушши илсе тăмалла тăнă; 3)конорар та пĕр 16 17 тенкĕ илнĕ. Ку йапаласем 50 тенкĕ ыгла та тăраççĕ. Çитăрăва ку та çитмен.

Курнавăш 1-мĕш преми илчĕ, тесе, еппин, ăна пĕтĕмĕшпех Калккинсем, Çитăрăвсем аллине парас.. Леш, ĕлĕк Кĕтерин паттăрсем («ТУЗ»-сем) çĕнтерӳ паттăрĕсене—Поҫомаккĕн, Рументсăв, Орлох—Ҫесменски текен „короҫсене“ çĕршер пин теçеттин çĕр, темиçе пин ҫун хресчен парнеленĕпе пĕрех пултăр, пĕрех хут.

Курнавăш, кооперативăн тĕлĕшпе есĕ 1-мĕш преми илтĕн, аҫа, парнеле çавсене. Тен, тасату тĕлĕшĕнчи те 1-мĕш преми илĕн. Ун ҫухне паттăрусем мĕнле сиксе харкашнине курма халех хатĕрленсе тăр.

В а ç а н к к а.

Автопус çулĕ уçăлас умĕн.

— У у у? Ĕçсĕр йулмалла пулать.

— Поссопи те памĕç.

— Парас çук çав! Хуçасем пире нихăшне те сотстрахра страхованă туман.

Шупашкарта.

— Пайăн вырсарни кунĕпе, ма вара çынсем портфĕлсемпе çӳреççĕ.

— Шывă кĕме вайăççĕ вĕрем.

Йапăх пулăшком.

— Сирĕн пулăшкомăн хускалми пурлăх (нетвишимăй имуш-ђĕствă) пури?

— Пур — претçетаттĕлĕпе çекреттарĕ.

Çемçе характĕрлĕскер.

Çтена тăрăх, çўлĕкри ђашăк-тирĕксене сăрласа, тўле çинелле ђĕлĕм тĕтĕмĕ авкаланса сарăлаť. Ђалак хĕр пек авкаланаť тĕтĕм.

— Пăлл-пăлл!—вĕрсе кăлараť ăна туртакаbĕ.

Çамки çине ун, пĕриккĕ çăтмаллăх тар тухнă. Çамка пĕрĕмĕсем хушшинђе вăл тар пĕрђисем ђĕрĕ кĕмĕл пек ђĕтреесе тăраççĕ Ик тĕлте тем пирки айккивелле пăрăннă, телейне çухатнă сăмса, тăрсан-тăрсан, шарт çўлелле сиксе илет.

— Мĕн курас? Тасатĕç вĕт, шеремет-сем.. А йеçли тĕрĕссипех, как çлетăť тумăť тусан, мĕн пирки тасатмалла мана? Кромĕ ырлăх кама мĕн тунă епĕ?

Сак çине ђĕлĕмпе тăсăлса выртнă Тăхтаманăв тапак тĕтĕмне ĕмсе пынăçемĕн кашни минутрах шухăш ăшне шалалла та шалаллах пуса пыраť.

Ун умне иртнĕ кунсем пĕрин хыççăн тепĕрри лайăх, кăмăллă, картгинккăсем пек тухса тăраççĕ. Акă вĕсе-ђен пĕри:

...Иван Кирилђă ывăлне авлавтарнă. Ну, мĕнех пур вара унта?! Ну, авлавтарнă та, кăна, как йалти йатлă çынна туйа ђĕннĕ. Аван пулнă туй, вăйлă, хăватлă пулнă. Сăри те ерехĕ те çителĕклĕ,—хăť йалĕпе шăвар.. Ну, мĕнех пур вара унта, мĕнех пур айăпа кĕмелли? Пуйан çын сана туйа ђĕнет,—мĕнле кайса, хисеп тумасăр ђăтăн унта? Ёçнĕ, конешнă, ёçкĕсĕр туй та мар вăл. Ну, туй хыççăн, пĕр уйăх иртсен, каш-нийех ывăл ваљљи çурт вырăнĕ шыраť-Иван Кирилђă, расуметсă, йатлă çын патне пынă:

— Çапла, çапла, мĕнлеши, çав, йал варринђи çĕнçĕре кайнă Çемукăн вырăнне епĕ хам ывăл ваљљи илме пултараймăпши?

Мĕн тăвас?! Конешнă телă кулаксемпе кĕрешес пулаť, мах парас пулмасť вĕсене, ăна, как парттийнăй çелсовет, такçанах пĕлетĕп епĕ. Но вĕт еп ун патĕнђе туйра пулнăтăк раç!.. Раç мошнă çын сана çăкăртăварпа йышăвсан, ăна кайран ђул муклашки тыттарма?! Çук, ман характĕр ун пек посвођаť тумасť, ман характĕр... Ну, неуштă вара ман пек характĕрлĕ çыннăн парттирен тухмалла?! Та, хаçат тăрăх, ытти комунистиђĕски сас-ђĕв тăрăх çакăн пек, ман

пек характĕрлисене кăлармалла пек тухаť. Кулаксемпе ни ни çваç пулмалла мар партнийтсăсен... Ах, несăстнăй характĕрлĕскер еп, мĕнле çăлăнас тасатуран?

— Ваӈкка!—терĕ хавас саспа Тăхтаманăв кăçал вĕренсе тухнă ывăлне.—Ес портретсем риссоваť тума маçтăр вĕт?!

— Пултаран, атте!—тет ывăлĕ ашшĕ ырланăшăн хавасланса.

— Ну вот, каçӈăн штуп çак çтенасем çинӈе Сталĕн, Пуххарĕн, Калинĕн, Ленĕн... тата камха пирĕн вошĕсем?.. Путенăй, Хрунçĕ, Молăттăв портреӈĕсем çакăнса тăӈăр... Троцки... çук! Троцкине йурамасť, асту, аташтарса ан йар, вара çийен ман пуçа!

— А, мĕн тума атте?

— Ес мĕн тумаллине ыйтса ан лĕпĕртеткеле, пĕӈĕккĕха ес, ăсу та сан ман хăлха шăтăкĕнӈи тусан ӈул çеç... Портретсене çакăнта çакса пĕтер те, вара тата лосăнксем çыр.

— Мĕнле лосăнксем?—ыйтаť ывăлĕ.

— Çиӈӈас калăп: сотсиалисăм урлă копперативи патнелле!

— Мĕнле?—тĕлĕнет ывăлĕ.—Копперативи урлă сотсиалисăм патнелле пулĕ...

— Ах, аçа çаптăрах! Ӈут çеç хам политвекрамăтнăçа кăтартатăмӈăӈ вĕт...

Унтан кăшт шухăшласа тăраť те, Тăхтаманăв, шухăшлама пăрахса, савăнăçлăкулса йараť.

— Ун пек мар ĕнтĕ, Ваӈкка, епĕр татах та йунашăпăр... Йунăшас мар тесен, пырха ес ӈиттаӈнăна, ӈухха, унта плаккатсемпе лосăнксем нумай... Ӈӳреӈеренкĕр те (пĕлен вĕт унта ванӈăк ӈӳреӈе пуррине, савегуйшӈи те Шупашкара кайнăха хаӈ) пĕтĕмпе илсе кил,вара веç çак çтенасем çине çакса гух! Шивă, атту ыранах пире тасатма килеççĕ...

Ваӈкка хăпăл-хапăл картус тăхăнса тулалла вĕçсе тухаť. Вăл тухса кайсан, кăшт тăрсанах, киӈкартишĕнӈен вуӈах вăтти çĕклесе Тăхтаманăвăн арăмĕ кĕӈĕ.

— А ес!—терĕ хыттăн арăмне Тăхтаманăв.—Иккунсене халех ӈăлана тухса хур, шивă, штăп пĕр сăмахсăр!

— Ма ара, сана тимеççĕ вĕт вĕсем?

— Мана тивмеççĕ те, ыттисене тиме пултараççĕ... Шивă-шивă, нумай калаçса ан тăр. Çăкăрсăр йулас мар тесен, халех ӈăлана иккунсене!

Тепĕр кунне çак йала пынă парттин тасату комиççийĕ Тăхтаманăв патĕнӈе ӈӳрăнӈĕ. Комиççи претçетаттĕлĕ алăкран кĕрсенех, унталла-кунталла пăхкаласа, çтена çинӈе тĕрлĕрен плаккатсем, лосăнксем курса, портретсене асăрхаса тĕлĕнсех кайрĕ.

«Мĕнле ара ку çын çинӈен районра наӈар калаççĕ —тесе шухăшласа илӈĕ вăл хăй ăшĕнӈе.—Пӳртре иккон та çук, йĕри тавра çĕнĕ плаккатсем, лосăнксем, поӈшевиксен портреӈĕсем, хаçатсем...»

— Авани, Тăхтаманăв й.,—терĕ вара саспах комиççа претçетаттĕлĕ.—Мĕнле пурăнаттăр?..

— Как витĕтте,—тет Тăхтаманăвĕ.

— Аван, аван...

— А, неӈçе унăпăн,—каллех калаť Тăхтаманăвĕ.—Вĕт пирĕн йалтисен те пĕлес пулаť пăртак, массă хушшинӈе примерлă пулас пулаť... Хăвăр пĕлеттĕр...

— „Тĕлĕнмелле,—ăшĕнӈе шухăшлаť комиççи претçетаттĕлĕ.—Ма наӈар калаççĕха ун çинӈен, склокка тавраш çуки кунта?“ Анӈах ку тĕлте пӳрте вуламалли çурт пуçлăхĕ пырса кĕрет.

— Тăхтаманăв, тавай вуламалли çуртри плаккат-лосăнксене, вĕсене сан Ваӈкка вăрласа кайнине ман стураш курса йулнă! тесе ӈашлаттарса хураť вăл.—Вот кайанни аӈи!

Тăхтаманăв, унӈăн ура çинӈескер, вăйсăрланса çитсе сак çине кайса лараť. Вуламалли çурт пуçлăхĕ сак çине улăхса кайса, лосăнк-плаккатсене сĕвме тытăнаť...

Малалла? Малалли еп каламасăрах паллă, калас мар ун çинӈен, Тăхтаманăв та ыглашки кӳренĕ... Р.

Тухтăрпа ӈăваш арăмĕ.

— Мĕншĕн-ха ман куç тӳрленмест, икĕ çул çӳрерĕм ĕнтĕ?

— Шăлмалли пĕрех пуӈ сав?

— Мĕнле пĕрре аӈах,—темиçе те: кĕпе архипе те, саппунпа та, тутăр вĕçĕпе те шăлатпăр епĕр.

Кама хăçан сăмах çитмест.

Писсатĕлĕ—хăй çыракан калава илемлетме сăмах çитмест.

Поэта—сăвăсене рифмăлама сăмах çитмест.

Хуликан аӈăна—хĕрсене хăй майлă çавăрнă ӈух сăмах çитмест.

Арăма—упăшки ватсан упăшкине хирĕç ӈĕвме сăмах çитмест.

Слушăшӈийĕ—уӈрешӈенийĕ ӈăвашсем пырсан таблантарма ӈăвашла сăмах çитмест.

Копперативпа прикашӈăкне—тавар хакне калама сăмах çитмест.

„Капкăна“ вилнĕ çынсене ахăртарма сăмах çитмест.

Аҕа вăййи.

(Атăлăн леш айаккине йуратаканăн сăвви — ретакси).

Пĕрттен пĕрттен, иктен иктен,
Алăк тапаҕ тапмарипе,
Мешҕан ăсле ăсталаса,
Укҫа тăкса, сăмах татса,
Иупасене ҕутлă ҕутла,
Вута хурса кăмрăклатса,
Халăх валли куҕаҭ тума
Иăвăҫ пахҕи пултăр тесе—
Иуман вăрман ҕĕртме тăрса,
Пĕр шит тăршшĕ ҫăка лартса,
Курăк акса, утă ҫĕртсе,
Ҕăрăш лартса, ҕăрăш хăртса—
Курăс курăс, курса курăк,
Тăппăн курăк, шăппăр курăк
Шăпҕăк, тух!

(*Тух! тенĕ сăмах кам ҫине тухнă аҕана тӳпелеме тытăнаҫҫĕ; аҕи хăвăртрах малалла ҫырнă сăвăсене каласа пĕтерес пулаҭ*):

Пĕрттен пĕрттен, акăш макăш,
Тупнă ĕҫсем ĕҫ ҫук ҫĕртен.
Теме кирлĕ ун пек сатсем,
Атăл, пуҕвар йамăт ҫĕртен.
Такам ҫынни ҫав лакăма
Пырса лартăр ирĕк ҫĕртен
Пăҕă ҫĕре, ухмах ҫын пек,
Пăхса ларма йупасене.
Пĕтрĕ пурнăҫ, Атăл хĕрне
кайас вырне,
Ҫав лакăма кайма лексен.
Кунта пирĕн—тухан кайан
Тĕнҕе курма Атăл хĕрне,
Курса пуплен йулташсемпе,
Курса ҫӳрен, пăхса ларан.
Иĕри тавра хĕрĕх ҫухрăм
Куҫпа пăхса курнă таран.
Кам леш йенне кайас текен
Ҕупаҭ анаҭ Атăл хĕрне,
Тытаҭ весла, тытаҭ хӳре,
Каҫаҭ, кайаҭ леш йенелле.
Унта вăрман, унта йăлăм—
Ҕупас тесен, ҕупма ирĕк,
Выртма, ларма, шыва кĕме—
Хăтте кутăн, хăтте пуҫăн;
Хĕвел ҫинҕе пиҫес тесен—
Сана валли хăйăр хатĕр,
Мĕнҕул кирлĕ хĕвел ҫутти,
Сухăм тесен—хăва кĕтти.
Пĕҕҕен тесен—пĕҕҕен ҫӳрен,
Иккĕн тесен—тӳррисемпе,
Сахал пулсан—пĕтĕм халăх
Тухаҭ тапса хулипеле.
Атăл тăрăх йарăнмашкăн
Ларатăн та, ҕуптаратăн
Луткапала йулташсемпе
Ҫиле хирĕҫ, ҫиле майлă,
Урлă пирлĕ ăҫта кирлĕ.
Тепĕр ҕухне ирттермелле,
Харăс харăс йурăсемпе,
Шăйи шайи сасăсемпе,
Кĕпе вĕҫĕн, пес кĕпесĕр,
Труссиксемпе, труссиксемсĕр.
Áҫта кунта, Шупашкарта,
Сатсем лартса тĕлĕнтерме
Ирĕк тĕнҕе ĕмĕртенпе
Курса ӳснĕ халăхсене!
Манăн ăспа, сатсем лартса
Кăлăх укҫа салатиҕҕен,
Ҫав вырăнта хырăм валли
Лартас тăвас ҫимеллисем...

А. Иефремов.

Камăн мĕн тумалла

Мелиоҫемри ҫĕрйĕркелӳ пайĕн Пĕрремĕш Алин опҕинҕе (Шупашкар р.) ҫĕр виҫме пуҫланă ҫул ҫуралнă аҕа халĕ миҫе ҫула ҫитнине шутласа кăлармалла. Ҫĕр виҫҫе пĕтерессе курма пулмарĕ, — ватăлма пуҫларăм; миҫе ҫула ҫитрĕмши, хамăн ҫула пĕлесҕĕ, тесе йăлăнаҭ аҕа.

Ҕӳкҫырми (Канаш р.) йалĕҫтăвкомĕн халăх пӳртне туса пĕтермелле йыщăннă пртаккулсене ҫырма миҫе ҫĕклем хуг кирлĕ пулнине шутласа тухса, халăх пӳртне пртаккулсăрах туса пĕтермелле.

Уҕот ĕҫне вăйлатмалла. Хамăрăн пултарулăхсене уҕота (шута) илсе пыманни пысăк кăлтăкран кăшт ҫеҫ пĕҕĕкрех кăлтăк пулаҭ. Уҕҕот ĕҫне вăйлатмаллах. Ара милитсисем халиҕен те Хурнайĕнҕи (Иĕпреҫ р.) Хĕлĕп арăмĕ уйăхра миҫе ҕетвĕрт сăмакун йухтарнине шутласа кăларайман. Вăл вĕт кашни кунах карташĕнҕе йухтараҭ. Иухтараҭ те йухтараҭ, анҕах хăйĕн ĕҫĕсене шута илсе милитсисене каласа пама пултараймасҭ, мĕншĕн тесен вăл тĕттĕм хĕрарăм. Ҫутăлтармалла.

Лаҕкассинҕи (Канаш р.) Осоавиахим йаҕейкки ҫыруҫин пăшал ăшне патак кӳртсе лартнине кăларма мĕн ҕул укҫа кирлине шутласа кăлармалла. Ҫавна шутласа кăларас тĕлĕшпе те пулин ыйхăран вăранса пăхмалла.



Пушарпа кĕрешекенсем.

— Мĕншĕн çак есĕр пушар сарайĕн çивиттине йусамастăр?

— Сарайĕ çунма пуçласан çивитти витĕр çăмăр шывĕ антăр тетлĕр.

Ҫăваш республикĕн „кантонĕсем“.

Хĕвел каçала йенелле сулăннă. Тарăн вартан сулхăн варкăш кирлĕ мар çĕртенех хура вăрманалла вĕрет. Вăрман урлă пĕр кĕтӳ хур кайăк вĕçсе пыраҫҫĕ.

— Ки-ка-как, çав лери çутă кӳлĕ çине вĕçсе ӳкеҫҫĕ каҫҫен, тет малта йĕрлесе пыракан пуçĕ.

Кусене хирĕç тепĕр кĕтӳ тăрна вĕçсе пыраҫҫĕ.

— Кăр-рăнк, вăрмантан айăккалла ăçта кайатăр, аҫăр анăпăр, куята пăрçа анисем те нумай, терĕ тăрнасен пуçлăхĕ.

Тăрнасем хыççăн пăрçа анисене ытараймасăр хуркайăксем те анҫĕç. Тăрнасем кăвак çутă палăрсанах пăрçа çиме тытăнҫĕç. Хур кайăксене ку çимĕç килĕшмерĕ. Вĕсем шывсăр аптраса кĕçех типсе вилеҫҫĕç.

— Сирĕн хыççăн кайсан епĕр нумайах кунçул курса пурнайрас çук, хамăр шыв çинех каймалла пулнă мĕн, тесе уйăрăлҫĕç хуркайăксем хĕвел тухăç умĕн тăрнасене ылханса.

Хуркайăксем тăрнасен пурнăçне тутанса пăхни вăл нимĕн те мар-ха. Акă Ҫăваш Тĕпĕҫтăвкомĕн оркпайĕнҫе ларакансем кантон тума тĕлĕкре те тĕлĕнмен пулин те, Тĕпĕҫтăвком ҫленĕсене канттонла пурнăçпа пурăнма хушса инструкси кăларнă. Акă вăл Тĕпĕҫтăвком ҫленĕсем валли 1928-мĕш çулăн февралĕн 23-мĕшĕнҫе çырса кăçалхи нӳрĕн 1-мĕшĕнҫе аса илнĕ инструксин 1-мĕшле 2-мĕш пунктисем:

1. Члены и кандидаты Центрального Исполнительного Комитета ЧАССР, живущие и работающие на местах, считаются систематически связанными с той или иной советской работой по месту своего жительства в **данном кантоне.**

2. Все члены и кандидаты по месту их жительства должны непосредственно ознакомиться с хозяйственным положением, политическими настроениями, с работой сельских и **кантонных** *советских и общественных организаций, для того, чтобы составить общую картину* **кантонного хозяйства** *и* **кантонной работы.**

Ал пусакансем:

п/п. За председателя ЦИК,а ЧАССР (А. НИКИТИН).

Зав. Орготделом ЦИК'а (М. АЛЕКСЕЕВ).

Канттон вырăнне „Анттон“ тесе çырнă пулсан та ку инструксин вомĕрĕ 000/1414-мĕшех йулаҫҫĕ (малтавхи пекех). Хут номĕрĕ унпăн улăшăнмасăр, ал пусви те улшăнмасăр, вулакансен шухăшĕ çеç улшăнать.

Вăл ҫĕнмерĕ

Иаввар уйăхĕ.

Тулта шартлама сивĕ тăраť. Шăнса, хытса кайна йăвăҫсем ҫинҫе кăсйасем ҫăввик-ҫĕввик тесе сивĕпе йатлаҫаҫҫĕ. Ҫерҫисем сарайсем ăшне пытаннă. Пӳртре ăшă. Улăм кĕл шăшĕ сарăлнă. Стутентсов Ваҫукĕ, пукан ҫине тайăнса ларнăскер, аслă шкул ҫинҫен шухăша кайса лараť.

— Мĕнле шкула кайас?—мăнкăмăллăн, пысăк, патмар саспа ыйтаť вăл хăйĕнҫен хăй.—ВТУС, Муҫкаври патшалăх университтеҫĕ 1-мĕш №, Мускаври патшалăх университтеҫĕ 2-мĕш №, Левинкратри инҫтиттутсем, Ҫулхула... Хусанти университтет—ВОПИ... ха-ха-ха! ВОПИ йышшисемпе ҫыхланхтпăри вара епĕр!? Ҫулхула, Хусан, Ленинкрат,—мĕскер вĕсем маншĕн!? Мускав, Мускав,—вот мĕскер! ВТУС!!!

Пируса ҫăвара килсе хыпса, тӳпе ҫинелле килсе пăхаť Ваҫук. Унтан тĕтĕме ĕмсе. Ăна кайалла пол-пол! тутарса ункăсем кăлара-кăлара йараť. Тӳпери пĕр хушăкран, пирус тĕтĕмĕнҫени, йе урăххинҫен мĕнрен те пулса шарт сиксе, Ваҫукăн кăшт ҫарăк майлă ҫаврака сăмси ҫине ерешмен персе анаť:

— Ат, шайттан... вопийĕтс,—тесе ҫапса, алăк кутнелле йарат ăна Ваҫук.—Тупнă ăҫта персе анмаллине, пĕлмест вĕт мур еп кам пулассине!..

— Та а... иншенер, конешнă, лайăх йапала. Кам пĕлет, тен Атăлпа Тона пĕрлештерессине ман йĕркелемелле пулĕ,—ерешменпе воппийĕтс ҫинҫен манса, каллех савăнăҫлă шухăшлама пуҫлаť Ваҫук.—Кулса мар, ҫерйоснă калатăп, тен еп ҫавăн пек настойашҫи строиттĕҫнăй талант пулмаллискер!

Куҫĕсене хупса вĕҫекен шухăш тутлăхне ҫĕрене ĕмме тытăнаť Ваҫук. Ун умне Атăл, Тон шывĕсем тухса тăраҫҫĕ, темиҫе мĕлйун рапоҫҫисем...

— Та стравствует великкий Стутентсов! —ҫухăраť мĕлйунлă халăх. Шавлаť халăх, кĕрлет, тăвăл ҫухнехи тинĕс пек хумханса ҫĕкленсе тăраť. Унтах... Атăлпа Тон пĕрлешсе ҫĕкленеҫҫĕ. Вăл пысăк, ҫухрăм ҫӳллĕш трипунă ҫинҫе. Ăна, тата унпа хавасланса тăракан... Сталĕн, Рыккăв, Калинĕн йулташсене ҫӳлтен Атăлпа Тон пĕрлешсе мĕн хытланни, ун ҫинҫе савăнăҫлă прахутсем ҫӳрени, паршăсем шуса пыни веҫех курăнаť.

— Та стравствует великкий Стутентсов! —татах ҫухăраť темиҫе мĕлйунлă халăх. Савăннипе ҫăтаймасăр ҫухрăм ҫӳллĕш трипунăна пĕтĕмпех ҫавăрса илет, ҫăмăртанаť. Унтан Стутентсова ҫĕре ҫĕнеҫҫĕ, мĕлйунлă халăх ăна хăйĕн алли ҫине илесшĕн, алă ҫине илсе пĕтĕм тĕнҫе тăрăх кăтартса ҫӳресшĕн:

— Вот, пăхăр, курăр, мĕнле ҫынна йăгнă епĕр! Сирĕн ҫаврака моноккоҫҫă Ҫемперлен йышши мар ку ҫын, ку—настойашҫи кений!

...Ак, ун хыҫҫăн, халăх алли ҫинҫе пулса ывăннă хыҫҫăн вăл хăйĕн пысăк, ҫутă хваттерĕнҫе... Ҫук-ҫук, хваттерĕнҫе мар, мĕлйунлă халăх пилленĕ ҫуртра... Ҫаплă спаҫнă. Йĕри тавра ылттăн пурҫăн... Илемлĕ тĕнҫере пĕртен пĕр илемлĕ, калама ҫук ҫипер арăм... Вăл ылттăн пурҫăн ăшне путса, ҫаплă краваť ҫине тайаннăскер Ваҫук ҫине пăхаť:

— Ваҫҫă, Ваҫҫă,—шăппăн, илемлĕ саспа ҫĕнет арăмĕ.—Ох, мĕн тĕрлĕ аслă ҫын ес, мĕн тĕрлĕ телейлĕ хĕрарăм еп... Кил ĕнтĕ ман патăма, кил, ывăнтăн пулĕ халăх алли ҫинҫе йарăнса... Асту, ес ун пек ҫӳресе простутитсă ан ту, сыхлан Ваҫҫă, маҫари ан лектĕр, траххом, кĕҫĕ, вăл халăх хушшинҫе темĕнле ҫирлисем те пулĕ... Ну, кил ĕнтĕ ман патăма, кил Ваҫҫă, еп сана кантарăп хам ҫумра, ăшăтăп, с вăп, ҫуп...

— Ҫук-ҫук, Росă, хаҫ ун пек краваť ҫинҫе выртмалла вăхăт мар,—арăмне хирĕҫ калаť Ваҫук,—канмалли вăхăт мар хаҫ Росă... Пĕр ĕҫе пĕтернĕ пулсан, тепĕр ĕҫе тытăнмалла... Ан канҫĕрлеха, шухăшлатăп еп хаҫ... Шурă тинĕспе Хура тинĕсе пĕрлештересси ҫинҫен шухăшлатăп!..

— Ах, Ваҫҫă, мĕнле вара ес мана ҫистийех манатăн,—хытăрах, ҫиленнĕ пек пулса калаť арăмĕ.—Манăн вара ҫапла пĕҫҫенех лармаллан?.. Ах, Ваҫҫă,—пурҫăн тутăрпа куҫҫулĕсене шăлаť арăмĕ,—халиҫҫен те ĕнтĕ ес мана пĕҫҫен хăварса, пайтах асаплантартăн, каллех... Ес ман ҫумра пулмасан, Шурă тинĕспе Хура тинĕсе пĕрлештерни мана телейлĕ тăвати мĕн?.. Хăť Пăрлă тинĕспе пĕрлештер Хура тинĕсна,—мана вăл кирлĕ мар, мана—ес, ес (пурҫăн ҫине путсах, ҫĕтренсе йĕме тытăнаť арăмĕ) кирлĕ!..

— Ну, йурĕ, йурĕ Росă, ҫарăн ĕнтĕ, ҫарăн,—арăмĕ патне пырса, йăпатма пуҫлаť Ваҫук.— Еп ахаҫ ҫеҫ, ахаҫ ҫеҫ еп...

Нумай тăрсан арăмĕ йăпанаť, унтан, йĕ-

пеннĕ куçĕсемпе Ваçук çине ҫилайҫҫен пăхса тăрсан, Ваçука сасартăк хытă ыталаса илет те, кăвар пек вĕри ҫуптăваҭ...

Кăмака çинҫен çĕре кушак сиксе авса вăратнă Ваçука çак тутлă шухăшсенҫен. Катăршнăй кушакки пĕлмест вĕт çавăнта хăçан анмаллине!

Малтан çиленҫĕ те кушак çине Ваçук, унтан çаплах лăпланҫĕ;

— Ну, ниҫҫево, кушак тус, сана та хампа пĕрле илсе кайăп,—тесе кушака пĕрикĕ хутҫен савса илҫĕ. Унтан:

— А вçетки ман кĕнекесем тупасах пулаҭ вĕт, унсăрăн хатĕрленесси пулмасҭ пулмалла. Иккĕмĕш сыпăклă шкула пĕтерни 3 çул, нумайĕшне манса пĕтнĕ... Ăçтан тупасши кĕнекесем, е?—тесе ҫылайҫҫен тĕлĕрсе тăҫĕ. Иулашкинҫен;

— Ну ниҫҫево, хаҫха йанвар уйăхĕ çеç, кĕркунвеҫҫен çĕр хут кĕнеке тупса, çĕр хут хатĕрленме те вăхăт пур,—тесе, сак çине вырăн сарса, пуçелĕкне минтер хурса «канма» выртрĕ. Тулта сивĕ. Пӳртре ăшă, тата улăм кĕл шăрши килет—лайăх шăршă...

———

Çенҭапĕр уйăхĕ.

Урам тăрăх хыçала кутамкка çакнă çын сулланкаласа пыраҭ.

— Ăçтан килен, Ваçук,—тесе ыйтрăм епĕ.

— Хусантан...ВОПИ-не кĕме тесе кайнăҫҫĕ те...

— Кĕтĕни?

Вăл ҫĕнмерĕ. Р.

◆◆◆

Хĕвел каç йенелле сулăнсан.

Тасату тесен уҫрештенисенҫе ĕçлекенсен нумайĕшĕн куç шывĕсем шăпăрах икĕ пит çăмарти тăрăх йухса анĕç.

Шăматкун каçхине, уҫрештенисенҫе саҫатти пĕтнĕ хыççăн, икĕ шапшур тумтир тăхăннă, ылтăн шăллă слушăшҫи.. Çук ытла слушăшҫисемех мар, темле саветушҫи майлăскерсем пулмалла.

Кун каçиҫҫен: «ыран кил», «унта кай», «не мешай», «мы сейҫас саҫăттă» тесе ларни те ывăнтараҭ. Çапла ывăннă икĕ шурă тумтир тăхăннă ылтăм шăллăскерсем тасату çинҫен калаçса лараççĕ.

— Мĕнре сирĕн ĕç ем йулташ, Купин?

— Пырасса пыраççĕха, пирĕн комиççисем турĕçха. Тасату!

— Калама та аван мар, Çмирнов йулташ,—пирĕн те тасату!

— Пӳрократпа волоккиттăна пĕтерес майпа уҫрештенисенҫен пирĕн пеккисене йăлтах тасатас пулаҭ!

Çмирновăн çамки çине тар йухсах карĕ, кайлă-майлă пăхрĕ те, çамкине тытса шутласа та илҫĕ.

— Епĕ ним те куҫанмастăп. Пирĕн комиççи мана нимĕн те тăвас çук, унта ман кĕçĕн слушăшҫисем лараççĕ. Ҫăххи çăмартине нимĕн тăваймĕ, терĕ те, ылтăм шăлĕсем темле тухса çеç ӳкмерĕç.

— Сан унтан май пур. Епĕ те çавах куҫанмастăп Урайне тем ҫул шăлсан та «шăлнă çӳп» хăйĕн ĕлĕкхи вырăнĕнҫен шăлса кайсан, тата тепĕр аван кĕтес нихăçан шăпăр тивмен вырăн тупса выртаҭ. Ман ĕç те çавăн пек пулаҭ. Райĕçтăвкомран кăларсан, „финрапотнĕк“ тесе тепĕр укçа-тенкĕ шутламалли вырăна вырнаçăпах, терĕ те иккĕшĕ те савăнăçлă уйăрлса кайрĕç.

Р. ШАШКОВ.

Намăсран хăраса.

Хапăсра (Вăрнар р.) çуракине пурте плукпа тухнă. Пăр вăтам хресҫен сухапуçпе тухнă пулнă та, çынсем пурте плукпа суха тунине курсан, вăтаннипе калла тавăрăнса, çын плукне те пулин кӳлсе тухнă.

(Тĕпĕçт. 2-мĕш çеççинҫи Çтепланăв токлатĕнҫен).

— Мĕншĕн кайалла тавăрăнмалла пулҫĕ? Çул урлă кушак каçса кайнине куртăни мĕн?

— Кушакне курмарăм намăсне куртăм.

— Мĕнле намăс?

— Епĕ пĕҫҫен çеç сухапуçпе тухнă, ыттисем пурте плукпа.

Уҫйанăвск пасарĕнҫе,

Вĕренекен:—Мĕнҫул сĕт есĕр ĕнер сурăр?

Сутакан:—Мĕн пурĕ пĕр витре.

Вĕренекен:—Мĕн ҫул сутрăн?

Сутакан:—Мĕн пурĕ витре çурă.

Вăрнар районĕнҫе пулнă ĕç.

(Тĕлĕçт. 2-мĕш çеççире Çтеппанăв тунă токпатран).

— Есĕ комунис. Мĕншĕн массăпа ĕçлеместĕн?

— Мана массăпа ĕçлеме йăвăр. Епĕ унтĕр офитсер пулнă та, атминистратсилле ĕçлеме вĕреннĕ.

Хăватлин хăваҫĕ.

Ĕлĕкрех çаплаҫҫĕ йалта. Урампа пĕр тайкаланмасăр, кăшкăрмасăр кам та пулин иртсе пырат пулсан: —„камши ку ырă çын“— теҫҫĕç. Çав урампах кам та пулин тайкаланса, кăшкăрашса, амăшĕн йатне хутлăн ситлĕн асăнса иртет пулсан: —„Ах, ку мĕнле пысăк влаçши? Тур—папай сиртĕрех усалтĕсĕлтен!“—тесе хыççăн сăхсăхса йулаҫҫĕç.

Хаҫ апла мар ĕнтĕ. Хаҫ йалти влаç кăшт кăна сыпкаласан, урампа иртсе пынă ҫух йепле пулсан та урисене майперех тайкаласа ҫĕлхине шăлпа çыртса иртет. Тайкаланса кăшкăрашсан та, ăна:—«Мĕнле влаçши» —темеççĕ,— «халăх мурĕ», «растратҫăк», «хуликан», кирлĕ пулин тата —«прохвоснăй» турак» — тесе йулаççĕ. Çапла хаҫ йалта. Айăплисем тӳрленеççĕ, тӳррисем, хăш ҫухне, пăсăлма та хăтланаççĕ. Пулкалаççĕ тĕрлĕрен ĕçсем.

— Ырă çын, лайăх çын,—тесех суйласа хуҫĕç Палтийел йалсовеҫĕн (Шăмăршă р.) çекреттарне.

Луккианăв йатлă вăл.

— Тӳрĕ çын вăл, Луккианăв, суйлас!..

Суйларăмăр. Малтанлăха аванах çӳрекелерĕ. Хутран-ситрен сыпкалаҫҫĕ пулсан та, ӳсĕрлĕхне çынран пытарсах çӳреҫҫĕ. Пĕррехинҫе, тем хăйаматла, ытлашширех пулнимĕни—тытăнаççĕ кукăр урисем урамри тусана çыркалама!.. Простă тĕлĕнмелле. Çăварĕнҫен ашшин те амăшĕн те, тата такшин йаҫĕ те хĕресленсе тухат.

Пырат те тайкаланат. Пуçĕнҫи сӳнме пуçланă ăслескерĕ Луккианăва кăшт тĕртет те, Луккианăв:

— И-йех!.. Епĕ влаç, мат!. —çухăрат.

Ку вăхăтра Шăмăршă райĕçтăвкомĕн йамшăкки тем анкă-минкĕленсе Палтийелне пырса кĕрет. Райĕçтăвкомăн лаши лайăх. Трантасĕ, тимĕрлĕскер, ҫанкăртатса кăна пырат. Луккианăв çакскере йарса илет те, тытăнат муттит тума. Мĕн тăвас тетĕн. РĔК йамшăкки влаç мар, унпа хут те мĕн тума та пулат.

Луккианăв тата мĕн мĕн хăтланса пĕтни çинҫен сутйе çырса пĕлтерĕ, хаҫ айăпланисене тӳрленме хупнă çынсем çинҫен çырас.

* * *

— Ан йар!. Тыт!..

Ентрийел (Шăмăршă р.) урамĕпе асар-писер тăман тустарса Кăршанкă (Тутар респ.) ҫăвашĕсем тийевлĕ лавсемпе пыраççĕ. Иекорăвпа Куропатккĕн леçник куçĕсем ҫаларса кайиҫҫенех ĕçнĕ те, ку ҫăвашсене шаккама тытăннă. Кусем çуйăхнă çĕре йалсовет ҫленĕ Шишкĕн тухат. Ӳсĕрскерсене ҫарнă пулас. Леçнĕксенҫен пĕри пуртă йарса илет те, тытăнат Шишкĕна хăвалама.

Вăрман влаçĕсем вĕт. Шишкĕна тытнă тытманах пуртăпа касса вăйлах амантаççĕ.

Тӳрĕ çынсем, лайăх çынсем тесе, вĕсене вăрман сыхлама илнĕ. Вĕсем пур—ĕçсе пакраса çынна пуртăпа касса çӳреççĕ.

Хаҫ шурă çуртра пит шăппăн лараççĕ, тетха вирпĕçсене майла майла шутласа.

———

Пулкалаççĕ ĕçсем. Ĕçкĕ пурне те тăват.

ЕТМЕН А.

Тасату камппани йăвăрлăхĕ.

Финанс комиссариатне, Аслă сута, тата Шалти Ĕçсен Халăх комиссариатне тасатакан комиççисем аптранă: 7 — 8 кун шырарăмăр, пĕр пӳрократ та тупаймарăмăр, теççĕ.

— Пӳрократсем! Соснаттĕлнă пулăр! Хăвăр пӳрократ çинҫеи тасату комиççисене сайавленисем парăр. Сайавленисене марккăсăрах илеççĕ.

Труйски хыççăн,

— Сирĕн йалта труйски кунне йăвăçсем касса килĕсене капăрлатассине хирĕç турăсăрсем мĕн турĕç?

— Кам йăвăç касат, ăна тытса пĕрер ҫетвĕрт ерех ĕçрĕç.

Хамах.

Ерех лапкине çăва патне куçарнă майёпе çăва çинҫе кашни кунах ерех ёçекеннисене курма пулаť.

Шупашкар çăвин пулас илемлёхё.

Паттăр çын.

... Ну, ну! Малаллине каллха.

— Малалла мён пулни паллах ёнтё. Милитсионерё хăравçăскер пулмарё, хам та кайа йулсах пымастăп. Малаллах тёртетёп. Вăл çилленсе карё. Пётём вăйне пухса хирёç тăҫё. Халăх пухăнҫё курма. Пурте курасшăн. Кёрешрёмёр, кёрешрёмёр. Иăлăхиҫҫенех кёрешрёмёр. Иулашкинҫен епё ăна тёртсе пырса клоçета питёрсе лартрăм.

— Ну у? Милитсионера и? Малалла вара мёнле?

— Мёнлине... нимех те мар. Çамки çинҫи тарне шăлса илҫё те милитсионерё: ай-ай, терё,—есё манран лайăхрах выҫатăн иккен... шашкăлла, терё. ИСЕН.

Копператтив майлă шухăшсем.

Тавар шырама кайнă ҫухне копператтив претçетаттёлё çатан урапапа кайаť, прикашҫёкё хыт урапапа, копператтив ҫленёсем çёнё çăпатасем сырнă икё урисемпеле (çурăм хыçёнҫе тепрер мăшăр çăпата та пулма пултараť).

oOo

Копператтивне уçма çăмăлах мар, уставне рекистратси тутарма тата та йăвăргарах.

oOo

Уҫрештенире—„ыран кил“ тенине илтме пулаť, копператтивра—„тавар çук“ тенине, килте иккёшне те (уҫрештенипе копператтивне те) вăрçнине.

oOo

Кашни суккăр çыннах ревиçи комиçи темеççё.

oOo

Хырăм потрепилккă лавкки мар — пушă пулма йуратмаť.

Раттиокраммă

пурне те!
пурне те!
пурне те!

Кам авкуст уйăхёнҫен пуçласа ÇУЛТАЛĂКЛĂХ

КАПКĂН

çырăнса илет, çав 5 пин йапалаллă пысăк выҫавра тăма пултараť. Выҫавра çак йапаласем тухма пултараççё: пӳрт, лаша, плук, сăмавар, путилнёк, тата ытти пурнăçра кирлё йапала.

◆

„КАПКĂН“ хакё: çулталăка 1 тенкё, çур çула 55 пус, 3 уйăха 30 пус.

Укçа куçармалли атрёс: Чебоксары, Канашская, 15. Конторе газ „Кан ш“.

Пуштă йешҫёкё.

Петр Трофимăва —Санăн калавна илтёмёр те, ретаксире ларакавсем тёлёнсе хытсах карăмăр; мёнле терёмёр, пётём тёнҫипех паллă пулнă писсаттёл Лев Толстой Ишек шкулёнҫе вёренекен Петр Трофимăвăн калавне вăрласа хăйён йаҫёпе кăларнă, терёмёр. Есё ху çуралаҫҫенех вăрлама пултарнăçке вăл сан калавна! Вот паллă писсаттёл те ёнтё ăна.

Хитре ҫёкеçе, Иăлтăртийе, Руҫăкпа перона, Хирлене, Хут татăкне, Ив-ва, т. ыт. те—«Капкăна» мухтаса, ăна илме ҫёнсе çырнă сăвăсем ретаксайе кашни кунах килеççё. Кёртместпёр вёсене. «Ил» теме пулаť, хăвăр илсе пример кăтартăр.

Хветёр Макарна Есё çыратăн: Пирён Нурăсри 2-мёш сыпăклă шкулта вёренекен Феотăрăв Иван мана „Ваççили Иванҫă“ тет:—Епё Ваççили Иванҫă марçке—Макар Михалҫ, тетён. Апла еппин. Çтена хаçатёнҫе „Капкăн кётесси“ уçăр та, çав кётесе тытса хупăр. Вара йăнăш калама пăрахё.

С. Çтеппанăва. «Капкăн» ваҫҫи топлатной çырусем йама йурати, тетён. Хаҫ ку йанă пеккам кама йуратни çинҫен çырнă çырусене йарсассăн, хăна «Капкăна» кёртетпёр.

Çĕнĕ кĕперпе хăравçăсем.

— Краштăнсем, тархасшĕн соснаттĕлнă пулăр!.. Хăшĕ те пулин малтан каçса кайăр.

— Ху лаша кӳлсе каçса кай, вара епĕр те каçăпăр.

Ответ. редактор Г. Н. Казаков.

Чувашлит № 1742. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга". Нап. 3300 экз.